“Радиохум – хаçат страницинче: нарколог мĕн сĕнет-ши?”

# Инкек алăкран ан шаккатăр тесен

***Кашни ашшĕ-амăшĕнех хăйĕн ачине телейлĕ курас килет. Ывăл-хĕрсем çитĕннĕçемĕн чунри лăпкăлăх çухалма пуçлать. Ача киле вăхăтра таврăнмасан, сахал-и ашшĕ-амăшĕ каçсене ыйхăсăр ирттерет. Ăçта-ши? Кампа-ши? Йĕркеллĕ çÿреççĕ-ши?***

***Сăлтавĕсем те пур çав халĕ çакна валли. Пурнăç хăвăрт улшăнать. Ыррипе пĕрле сиенлĕ пулăмсем те хăйсем хыççăн хура йĕр хăварма ĕлкĕрчĕç ĕнтĕ. Сăмах кунта вĕсенчен пĕри – наркомани пирки пырать. Районти тĕп больницăри нарколог Л. М. Иванова пĕлтернĕ тăрăх, пирĕн районта паянхи куна наркомансем çук. Çапах та çакă лăпланса лармаллине пĕлтермест. Мĕншĕн тесен кирек епле чире сиплессинчен унран асăрханттарма темиçе хут çăмăлтарах. Наркомани хăйĕн серепине çакланнисене мăйранах вĕçерĕнеймми чăмăртама хăтланнине шута илсен, пушшех те.***

***Мĕн тумалла паян ашшĕ-амăшĕн çак синкер хапха умне килсе ан тăтăр тесен? Ачасен шăпи телейлĕ пултăр тесен? “Çамрăксем – сывă пурнăç йĕркишĕн” икуйăхлăх пынă май та, кăçал Ача çулталăкĕ пулнă май та çак ыйтусенчен пăрăнса иртни тĕрĕс мар пулĕччĕ. Куншăн çеç те мар. Ашшĕ-амăшне куллен хумхантаракан ыйтусем çаксем. Урамра 21 ĕмĕр пулнă май пушшех те. Лариса Меркурьевна хаваспах хуравлама пулчĕ вĕсене.***

**– Лариса Меркурьевна, мĕнле майпа çамрăксем наркомани çулĕ çине тăраççĕ? Мĕн тĕкет вĕсене унта?**

– Пурнăçра çынсем ытларах обществăри правилăсене пăхăнма тăрăшаççĕ. Çакă сахалтан та кашнине хăйне хăй хăрушсăр туйма пулăшать. Тÿрех каламалла, халăхри пек каласан, хамăра хамăр рамкăра тытса тăма çăмăлах та мар. Тата çакă пурне те килĕшсех те каймасть. Алла наркотик тытсан вара чи малтанах шăпах çак ен – хамăр утăма хамăр контроллесси пĕтет. Наркоман пурте пăхăнакан нормăсемпе ниепле те пурăнасшăн мар. Наркотикпа пуçа минретсе, çав “сăнчăртан” вĕçерĕнсе “ирĕке” тухать. Вĕсем “кайф” тесе калакан туйăм шăпах çакăнта. Вăхăтлăха та пулин телейлĕ туяс тесе, чăн-чăн пурнăçран тарас тесе тем тума та хатĕр вĕсем.

Çапла вара çын çак хăрушă серепене икĕ сăлтава пула лекме пултарать: çын чарусăр пурнăç патне ăнтăлать пулсан. Ку пĕрремĕшĕнчен. Тепĕр сăлтавĕ - çын хăйне тытса тăракан рамкăра хăйне тăвăр туйсан. Çавăнпа та çул çитмен çамрăксем çак инкеке лекме пултарнинчен тĕлĕнме кирлĕ мар.

**– Çак сăлтавсем çинче тĕплĕнрех чарăнсан аванччĕ. Ашшĕ-амăшĕсене кăсăклантармалла пек вĕсем.**

– Пĕрремĕш сăлтава пула - пурне те тума юрать текен туйăма пула ашшĕ-амăшĕн тимлĕхĕсĕр юлнă çемьесенчи ачасем инкеке лекеççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем мĕн тăвас килнине тунă, чаракан пулман. Çавăн пекех ашшĕ-амăшĕ мĕн ыйтнине йăлтах илсе парса тăнă ачасем те çак сулăнчăка лекме пултараççĕ. Çак икĕ ушкăнри ачасем те “юрамасть” текен ăнлава йышăнмаççĕ. Çапла майпа çитĕнсе çемье рамкинчен тухса обществăра пурăнма пуçласан, пĕрремĕш хут вĕсем ăна тумалла марри, кăна тума юраманни пирки илтеççĕ. Тума юраманнине тусан, наказани илеççĕ. “Ах, çапла-и, - теççĕ кун йышшисем. – Сирĕн обществăра пурăнма килĕшместĕп.” Çапла шутласа наркомани серепине çакланаççĕ. Тепĕр чухне хăш-пĕр ачасем ашшĕ-амăшне юрамасть, тенишĕн çапла майпа “тавăраççĕ”.

Иккĕмĕш сăлтавпа вара, пачах тепĕр майлă, ача чух хăйсене ашшĕ-амăшĕсем çав тери çирĕп тытнă яшсемпе хĕрсем çакланаççĕ. Ăна ан ту, кăна ан ту, тенине хăнăхнă вĕсем çемьере ача чухне. Сылтăмалла е сулахаялла хăйсем тĕллĕн тунă утăмсемшĕн явап тытмаллине пĕлеççĕ. Çапла майпа ача чăнлăхран тухас тени вăл çемьерен кайнипех танлашать.

**– Çитĕннисен тата мĕн асра тытмалла воспитани ĕçĕнче?**

– Ачасемпе пĕр чĕлхе тупма тăрăшмалла. Пурнăç çакна кăтартса парать. Ашшĕ-амăшĕсемпе пĕр чĕлхе тупман ачасем те наркомани серепине çăмăллăнах çакланма пултараççĕ. Çакăн пек çемьери ача ыттисемпе те пĕр чĕлхе тупаймасть, хăйне пĕччен туять. Наркодилерсем вара çакăн пек ачасене часах асăрхаççĕ. Вĕсем ăна “шеллеççĕ”, вĕсемпе “туслашма” тăрăшаççĕ. Çапла майпа ачана пĕрремĕш доза тыттараççĕ. Ача вара ирĕксĕрех çĕнĕ “тусĕсене” çухатас мар тесе вĕсен ирĕкĕнчен тухаймасть, алла наркотик илет, хирĕçлеймест.

Е тата çакăн пек те пулать. Çиелтен пăхсан, йĕркеллĕ çемьех. Ашшĕпе амăшĕ темиçе çул ĕнтĕ пĕр-пĕрне кураймаççĕ. Ачисемшĕн пĕрле пурăнаççĕ, уйрăлмаççĕ. Ача вара, барометр пекех, йăлтах курать, туять, сисет. Çемьери черетлĕ “аслатиллĕ” çанталăкран вара вăл таçта та тухса тарма хатĕр: наркотик тĕнчине лекме те хирĕç мар. Вăл хăй пуррине аса илтересшĕн малтан йĕркене пăсас çул çине тăрать. Ашшĕпе амăшĕ çаплах “сивĕ вăрçăра” пулнине курса, ача наркотик серепине лекет.

Кĕскен каласан, наркоман тени вăл ĕçекен, хĕнекен çемьесенчен тухнине пĕлтермест. Çак инкеке ытларах чухне çиелтен пăхма ăнăçлă шутланакан çемьесенчи ачасемех лекеççĕ. Çавăнпа та аслисен шутламалăх пур кунта.

**– Ача çак серепене ан лектĕр тесен, наркотик сиенĕ пирки каласа пани вырăнлă, паллах.**

– Кунта наркотика алла илме юрамасть, тени çеç çителĕксĕр, мĕншĕн тесен кашни ачанах пĕлес, интересленес туйăм пур. Ачана çав туйăма сиенсĕр йăласемпе тивĕçтерме хăнăхтармалла. Çиме юраман çимĕç хăй патне тата та ытларах туртнине манса каймалла мар. Апла пулсан ачапа калаçнă чух наркотик сиенĕ пирки çеç калаçни çителĕксĕр, мĕншĕн вăл çамрăксене илĕртни çинче те чарăнса тăмалла. Мĕншĕн тесен наркодилерсен аргуменчĕсем çакăн пек: “Пурте наркотик япăх теççĕ, мĕншĕн тесен хăйсем тутанса пăхман. Ак, пĕр хутчен активсе пăх-ха, хăвах ăнланан вăл мĕн тери “кайф” кÿнине”, - теççĕ. Çавăнпа та ачана наркотик мĕншĕн илĕртÿллĕ пулни пирки ăнлантармалла, вăл проблемăсене вăхăтлăха “манма” пулăшни пирки, каярахпа çак йăла яланлăха куçни пирки ăнланмалла каласа памалла.

**– Мĕнле пĕлмелле ача çак тĕпсĕр авăра лекнине?**

– Ача япăх вĕренме пуçларĕ, нумай çиме пуçларĕ, пĕр вĕçĕм суять е кĕсйинче çулăм çинче ĕннĕ кашăк е урăх япала тупсан – ку, акă, мĕн çинчен калать: вăл е ку мерăсене йышăнма кая юлса асăрханă паллăсем кусем. Ача наркомани çулĕ çине тăнине кăтартакан чи малтанхи паллă вăл - ачари кирек епле улшăну. Калăпăр, малтан вăл нумай çинĕ – халь сахал çиме пуçларĕ, малтан чарăна пĕлми калаçнă пулсан – халь чĕмсĕр, малтан час çывăрма выртман пулсан – халь часах выртать тата ытти те. Унăн интересĕсем, характерĕ улшăнчĕ пулсан. Паллах, çакна уйăрма ашшĕ-амăшĕсен хăйĕн ачисене лайăх пĕлни кирлĕ.

**– Юлашкинчен мĕн сĕннĕ пулăттăр ашшĕ-амăшĕсене?**

– Ачана воспитани парасси çав тери кăткăс ĕç. Кашни ашшĕ-амăшех хăйĕн ачишĕн тем тума та хатĕр, çапах та çакна асра тытасчĕ. Ачана мĕн тăвас килнине йăлт тума та ирĕк пама юрамасть, çав хушăрах пур чухне те “ăна юрамасть, кăна юрамасть” тени те ырри патне илсе пымасть. Пĕчĕк айăпшăнах ачана наказани пани те тĕрĕс утăмах мар.

Е тата воспитани тĕлĕшĕнчи калаçусене илер. Мĕнле калаçатăр эсир ачапа? Кунта ачана кăсăклантарса яма пĕлни кирлĕ. Интереслех мар калаçу ун чĕри патне çитесси пирки калама хĕн. Тепĕр чух тата ашшĕ-амăшĕ ачисем çине тарăхса, вĕсемпе пĕр хушă калаçмасăр пурăнать. Çав тери тĕрĕс мар тăваççĕ.

Тата çакна манас марччĕ: ача ашшĕ-амăшĕ мĕн тунине йăлт асăрхать, курать. Çавăнпа та сăмах ĕçпе пĕр килмелле аслисен. Калăпăр, ачана туртма юраманни пирки ăнлантараççĕ, хăйсем вара алăран пирус ямаççĕ. Час-час алла эрех черкки тытакан ашшĕ-амăшĕ ачисемпе эрех сиенĕ пирки калаçнин те усси пĕрре те çук. Хамăрăн ырă тĕслĕхпе сывă пурнăç йĕркине хăнăхтарнине нимĕн те çитмест.

Аслисен ĕç нихăçан та пĕтмест. Çавăнпа та ача сирĕн пата пĕр-пĕр проблемăпа сĕнÿ е пулăшу ыйтсан, çакăн валли вăхăт тупмалла. “Ман вăхăт çук, хăвах татса пар” тени питĕ пысăк йăнăш пулать.

Ачасен кĕсйине ун умĕнчех ухтарни те тĕрĕс мар. Çитменнине унта мĕн тупнине ыттисене кăтартни воспитани рамкине пач та кĕмест. Тата, акă, мĕн хушса калас килет: ачана ашшĕ-амăшĕн хăйĕн харпăрлăхĕ вырăнне шутламалла мар. Хăйсем пек шухăшлаттарас тени те, пĕтĕм ĕçе хăйсем пек тутарма тăрăшни те тĕрĕс утăм мар. Ача уйрăм личноç пулнине яланах асра тытмалла. Çакăн пек чухне ача чунчĕри патне выртакан çул такăр пулĕ.

**– Тавах, Лариса Меркурьевна, калаçушăн. Халь çеç калаçнă инкек вара никам çывăхне те ан пытăр.**

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

Спорт хыпарĕсем

## Татьяна Моисеева парнесене тивĕçнĕ

Апрелĕн 5-мĕшĕнче Шупашкарта пирĕн ентешĕн, ачасемпе çамрăксен 2-мĕш номерлĕ Олимп резервĕсен спорт шкулĕн воспитанникĕпе Татьяна Моисеевапа тата унăн тренерĕпе Геральд Салдимировпа пресс-конференци иртнĕ. ЧР физкультурăпа спорт тата туризм министрĕ Анатолий Николаев Татьянăна «Биатлон енĕпе Раççей тава тивĕçлĕ спорт мастерĕ» удостоверени тата знак, кунпа пĕрлех асăну знакĕ, Чăваш Республикин Физкультурăпа спорт тата туризм министерствин «Çулталăкри чи лайăх спортсмен» дипломне, чечек çыххи панă.

Пултаруллă спортсменкăна ЧР биатлон федерацийĕн президенчĕ Николай Лисын та саламланă, Татьянăна тав сăмахĕ каласа чечексем тата укçан парне панă.

Кăçалхи сезон Татьянăшăн чăннипех те ăнăçлă пулса тăчĕ. Пĕрремĕшĕнчен, вăл Раççей командин тĕп йышне кĕме пултарчĕ, тĕнче чемпионатне хутшăнчĕ, Раççей чемпионки пулса тăчĕ. Тĕнче кубокне çĕнсе илессишĕн тунă çитĕнÿсем вара татах та курăмлăрах.

## Муркашсем – пĕрремĕшсем

Апрелĕн 7-мĕшĕнче Муркашри Спорт çуртĕнче 1989 çулхи тата çамрăкрах, 1991 çулхи тата çамрăкрах яшсемпе хĕрсем хушшинче волейболла выляссипе зона ăмăртăвĕсем пулса иртнĕ. Пирĕн районсăр пуçне унта Шупашкар тата Етĕрне районĕсен командисем хутшăннă. Хĕрсем хушшинче те, яшсем хушшинче те пирĕн район командисем çĕнтерÿçĕсем пулса тăнă, финала тухнă. Вăл вара Шупашкарта хĕрсем хушшинче апрелĕн 11-15-мĕшĕсенче, яшсем хушшинче апрелĕн 18-22-мĕшĕсенче иртет. Ăнăçу сунатпăр волейболистсене!

## Дзюдо енĕпе ăмăртнă

Апрелĕн 5-мĕшĕнче 1991-1992 çулсенче çуралнă яшсем хушшинче дзюдо енĕпе кĕрешессипе Чăваш Республикин Президенчĕн Н.В. Федоровăн кубокне çĕнсе илессишĕн 9-мĕш спартакиада ăмăртăвĕсем иртнĕ. Унта Муркашри ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн воспитанникĕсем япăх мар хутшăннă, хула командисене кăна ирттерсе пĕтĕмĕшле 5-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ.

## Сĕтел çи теннисĕ енĕпе

Апрелĕн 15-мĕшĕнче Муркаш шкулĕнче ĕç çыннисен спартакиади шучĕпе сĕтел çи теннисĕ енĕпе районти ял хуçалăх предприятийĕсем, организацисем тата учрежденисем хушшинче районта мала тухассишĕн ăмăрту иртет. Вăл 10 сехетре пуçланать. Командăра 4 çын (1 представитель, 2 арçын тата 1 хĕрарăм) пулмалла. Призлă вырăн йышăннă командăсене район администрацийĕн вĕрентÿ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн дипломĕсене, уйрăм спортсменсене парнесемпе дипломсем параççĕ.

## Пĕтĕм Раççей конкурсне хутшăнĕ

М. Шуйцев ячĕпе хисепленекен çарпа патриотика клубĕ массăллă спорт тата физкультурăпа сиплев ĕçĕ енĕпе вырăнта ачасемпе, çул çитмен çамрăксемпе тата çамрăксемпе ĕçлессипе 2006 çул итогĕсемпе республикăри смотр-конкурс çĕнтерÿçи пулса тăнă. Çапла вара пирĕн район командин кăçал Мускавра пĕтĕм Раççей конкурсĕнче республика чысне хÿтĕлеме тивет. Ăнăçу сунатпăр вĕсене.

**Хамăр инф.**

## Тав тăватпăр

Шаптак Муркаш ялĕнче пурăннă Алексей Васильевич Толстова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕнпе çак пысăк хуйхăна пайланăшăн районти казначейство пайĕн ĕçченĕсене, район администрацийĕн финанс пайĕн, Муркаш ял тăрăхĕн, районти тĕп больницăн коллективĕсене, хурăнташсене, пĕлĕшсене, пускилсене пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

**Толстовсен çемйи.**

Муркаш ялĕнче пурăннă Герман Валентинович Щеглова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕнпе çак пысăк хуйхăна пĕрле пайланăшăн Муркашри пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх предприяти ертÿçине Н.А. Шишкина, «Моргаушавтотехсервис» предприяти ертÿçине Л.Д. Димитриева, вĕсенче ĕçлекенсене, Муркашри лицей коллективне, тăвансене, пускилсене, хурăнташсемпе юлташсене, Муркаш халăхне чĕререн тав сăмахĕ калатпăр.

**Мăшăрĕ, ачисем, кинĕ, мăнукĕсем.**


## Пĕлтерÿсем. Объявления

**Отдел социальной защиты населения Моргаушского района Министерства здравоохранения и социального развития Чувашской Республики объявляет конкурс на замещение должности государственной гражданской службы главного специалиста-эксперта.**

**Требования, предъявляемые к претендентам:**

**высшее профессиональное образование, наличие стажа (опыта) работы по специальности не менее трех лет, знание отраслевого законодательства, специальные знания, аналитические способности.**

**Документы принимаются в срок до 12 мая 2007 года по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, д.6, каб. 111, с 8 до 17 часов.**

**Подробную информацию о конкурсе можно получить на сайте отдела (http://gov.cap.ru/home/71/OSZN/vizitka.htm) и по тел. 2-12-69, эл. почта soc@morgau.cap.ru**

**Продаем керамзитобетонные блоки, цемент М-400 50 кг 178 руб.**
**Тел.: 8-960-307-41-78, 8-927-851-47-82. 1-2.**

**На сезонную работу в Подмосковье требуются плотники, оплата труда сдельная.**
**Телефон: 8-910-516-44-22. (Николай).**

**Хура тĕслĕ ĕне сутатпăр. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Москакасси ялĕнче пурăнакан Демьян Степановран ыйтса пĕлме пулать.**
**Тел.: 8-927-845-36-23.**

**Продается автомобиль УАЗ «Санитарка». Недорого.**
**Телефон: 8-906-387-58-54.**

**Куплю однокомнатную квартиру в с. Моргауши.**
**Телефон: 8-903-065-36-28.**

**Спутниковое телевидение, от 4 тыс. рублей, с установкой. Гарантия.**
**Тел.: 8-906-385-29-30. 5-6.**

**На постоянную работу в ООО «Моргаушрайбыт» требуются: энергетик, парикмахеры, швеи, требование – опыт работы, мастер-наладчик швейных машин – образование и опыт работы не требуется.**
**Контактный телефон: 2-18-40. 3-4.**

**Требуются для работы в Нижегородской области бетонщики, каменщики, штукатуры, плотники. Условия: проживание, трехразовое питание. Оплата сдельная.**
**Телефон: 8-906-133-67-72. 1-2.**

**ОАО «Моргаушскагропромхимия» на постоянную работу требуется электрогазосварщик VI-V разряда с опытом работы не менее 3-х лет. Оплата – 5000 рублей.**
**Телефон: 60-2-41.**

**13 апреля в РДК Ульяновская обувная фабрика проводит расширенную продажу обуви из натуральной кожи.**

**ОАО «Моргаушский кирпичный завод» уведомляет своих акционеров о проведении годового общего собрания акционеров ОАО «Моргаушский кирпичный завод». Дата собрания - 03 мая 2007 г. Начало собрания - 10-00 часов. Начало регистрации - 9-00 часов. Место проведения: ЧР, Моргаушский р-н, с. Моргауши, ул. Восточная, д. 1, актовый зал.**

**Повестка дня:**

**1. Определение порядка ведения общего собрания акционеров.**
**2. Избрание счетной комиссии.**
**3. Утверждение годового отчета о результатах финансово-хозяйственной деятельности общества за 2006 год.**
**4. Утверждение годовой бухгалтерской отчетности, в том числе отчетов о прибылях и убытках, а также распределение прибыли общества по результатам финансового года.**
**5. Заключение ревизионной комиссии.**
**6. О выплате дивидендов за 2006 год.**
**7. Избрание членов Совета директоров.**
**8. Избрание членов ревизионной комиссии.**
**9. Утверждение аудитора общества за 2007 год.**

**Список лиц, имеющих право участвовать на годовом общем собрании акционеров, составлен по состоянию на 20 апреля 2006 г.**

**Справки по тел.: 8(241)2-11-77, 2-16-38.**


Коллектив МОУ Моргаушский лицей выражает глубокое соболезнование учителю русского языка и литературы Щегловой А.Г. в связи с безвременной смертью ее отца

**ЩЕГЛОВА**
**Германа Валентиновича.**

Тойкилтĕ шкул коллективĕ кунта чăваш чĕлхипе литератури учителĕнче ĕçлекен А.Е. Петрова ашшĕ тата аслă вожатăй пулса ĕçлекен Л.В. Васильеван хуньашшĕ, çак шкулта нумай çул хушши хуралçă пулса ĕçленĕ

**Евтихий Васильевич**
**ВАСИЛЬЕВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки вĕсен çемйисемпе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.


**ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”**
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРŸ ЯЛАВĔ"

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

**Директор-главный редактор**
**А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3506.**
**Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».**
**Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 10.04.2007 г.**
**Заказ**
**Дежурный по номеру ИЛЛАРИОНОВА Р.А.**
**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.